...ная библиотека имени В. И. Ленина
Отдел Национальной Литературы

28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
СЕНТЯБРЬ
5
ЮНКУН
172(6923) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Тĕштырăсене пĕтĕмпех пухса кĕртмелли вунăкунлăх задачисем

Паян тĕштырăсене пĕтĕмпех пухса кĕртмелли вунăкунлăх пуçланать. Чăваш республикинчи мĕнпур районсен сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсемпе пăрçа-ясмăксене пĕтĕмпех пухса кĕртмелле, çавăн пекех мĕнпур тырăсен 85 процентĕнчен кая мар турттарса капана хывмалла тата 60 процентран кая мар авăн çапса пустармалла. Çакăн пек задача тăрать ĕнтĕ Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем, комбайнерсемпе машиноведсем тата мĕнпур ялхуçалăх работникĕсем умĕнче. Çав задачăна пурнăçа кĕртни эпир нумай вăй хурса çитĕнтернĕ тырпулăн чылай пысăк пайне сыхласа хăварнине, Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли, колхозниксем валли ытларах тырпул пухса кĕртнине пĕлтерет.

Тĕштырăсене пĕтĕмпех пухса кĕртмелли вунăкунлăх халăхăн политикăллă çĕнĕ çĕкленĕвĕ ӳссе хăпарнă тапхăрта пуçланать. Японие çĕнтернипе халĕ çĕршыври пĕтĕм халăх хавасланса савăнать. Аслă Сталин сентябрĕн 2-мĕшĕнче халăха чĕнсе калани пĕтĕм тĕнчипе янраса кайрĕ, вăл пирĕн ĕççыннисен чĕрисене çав тери хаваслантарса çĕклерĕ. Сталин юлташ çапла каларĕ:

«Çĕнтерӳ тăвас тесе, пирĕн совет халăхĕ, вăя та, ĕçе те шеллемерĕ. Эпир йывăр çулсем пурăнса ирттертĕмĕр. Анчах халĕ ĕнтĕ пирĕнтен кашниех: эпир çĕнтертĕмĕр, тесе калама пултарать».

Эпир çĕнтертĕмĕр, мĕншĕн тесен пирĕн чаплă хĕçпăшалланнă паттăр Хĕрлĕ Çара çапăçура мĕнпур ĕмĕрсенчи чи аслă полководец Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ ертсе пычĕ, мĕншĕн тесен Хĕрлĕ Çара рабочисемпе колхозниксем, пирĕн совет интеллигенцийĕ, Сталин кăтартăвĕсене шанчăклăн пурнăçа кĕртсе пыраканскерсем, хăйсен вăйне хĕрхенмесĕр ĕçлесе пулăшса тăчĕç.

Вăрçă пĕтрĕ. Вăрçă ишĕлтерсе хăварнă мĕнпур хуçалăха хăвăртрах юсаса ура çине тăратас тесе, мирлĕ пурнăçа çирĕп сыхласа усрас тесе, пирĕн татах та ытларах вăй хурса ĕçлемелле. Тăван çĕршывăн çарпа экономика хăватне татах та ытларах тĕреклетмелле.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн тырпула хăвăртрах пухса кĕртмелле, ытларах тырпул пухса илмелле. Акă мĕншĕн ĕнтĕ тырпул пухса кĕртес ĕçе вăраха яма юрамасть, тырпула тăккалама юрамасть.

Сентябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне илнĕ даннăйсем тăрăх, Вăрнар районĕ тыră вырас тĕлĕшпе ытти районсенчен лайăхрах ĕçлет. Вăл пучахлă тырăсенчен 89 процентне вырса пухнă. Советски районри колхозсем мĕнпур тырăсен 88,2 процентне вырса пухнă. Ку районри 8 колхоз кĕрхи тырăсене пĕтĕмĕшпех пухса кĕртнĕ. Етĕрне районĕнче вырса пухмалли тырпул 2.000 гектартан та сахалтарах юлнă. Çак районсем тыră пухса кĕртес тĕлĕшпе республикăра чи лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Анчах çапах çав районсен те вунăкунлăх вăхăтĕнче тыră вырса, кĕлте турттарса капан хывас тата авăн çапас тĕлĕшпе чылай ĕçсем тумалла-ха.

Малти вырăнта тăракан районсен те тумалли ĕçсем çавăн пек нумай пулсан, кая юлнă районсен вара темиçе хут ытларах вăй хурса ĕçлемелле пулать. Ку районсен шутне тырпула çурри кăна вырса пустарнă Кувакино районĕ, тырпула 62 процент вырса пустарнă Улатăр районĕ, Çĕмĕрле, Йĕпреç тата ытти хăшпĕр районсем кĕреççĕ. Çав районсенче кашнинчех вырса пустарман тыră темиçе пиншер гектар тăрать.

Асăннă районсем тырпул пухса кĕртес ĕçе мĕншĕн вăраха ярассĕ-ха?

Чылай çĕрте тыра вырма çынсем çитеймен пулин те, машинăсемпе тата кĕреплеллĕ çавасемпе усă курмаççĕ. Тырра çурлапа кăна выраççĕ. Нумай колхозсем ĕç дисциплинине япăхтарса янă пирки кая юлса пыраççĕ. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз тыră вырас тата кĕрхи тырăсем акас ĕçе вăраха янă, анчах апла пулин те кунта нумай колхозниксем ĕçе тухмаççĕ. Колхозри парторганизацийе правлени ĕçе пăсакансене тата кахалсене вăхăтра йĕркене кĕртме тăрăшман. Кун пек тĕслĕхсем ытти районсенче те сахал мар тĕл пулма пулать.

Халĕ колхозниксене çакăн çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла: тырпул пухса кĕртес ĕçрен пăрăнни Тăван çĕршыв умĕнче пысăк айăпа кĕни пулать, мĕншĕн тесен ахаль çухатнă кашни кун колхозшăн çав тери хакла ларать, çавна пула нумай тырпул тăккаланса пĕтет.

Вунăкунлăх вăхăтĕнче мĕнпур колхозниксене, ялти мĕнпур çынсене ĕçе явăçтармалла. Тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе пур тĕрлĕ мерăсем те йышăнмалла, ĕçлеме пултаракан кашни колхознике, кашни комбайнерпа машиноведа вунăкунлăхра тумалли ĕçсене кăтартса заданисем памалла, çав заданисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать.

Мĕнпур комбайнсемпе жнейкăсене тата лобогрейкăсене пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермелле. Кĕреплеллĕ çавасемпе анлăн усă курмалла. Çав ĕçсене пурнăçа кĕртмесĕр сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсене пухса кĕртме май çук.

Кая юлнă колхозсем çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхас пулать. Машинăсене, хулари ĕçе юрăхлă çынсене çав колхозсене ямалла та ĕнтĕ, вĕсене вунăкунлăх вăхăтĕнче тыră вырса пĕтерме, çапла вара хуçалăха çирĕплетме пулăшмалла.

Колхоз председателĕсем, совхозсемпе МТС директорĕсем тырпул пухса кĕртес ĕçе большевикла ертсе пыма тивĕçлĕ. Йывăрлăхсем çинчен кăна калаçса ларакан, анчах хăй çав йывăрлăхсене çĕнтерес, çынсен ĕçне тĕрĕс йĕркелес, колхозниксене уйхирте апатлантарассине тата ачасен яслине организацилес тĕлĕшпе нимĕн те туман колхоз руководителĕ—япăх руководитель. Çавăн пек колхоз председателĕ ĕçе кĕмен вăйсене курмасть, тырпул пухса кĕртес ĕçре ĕне выльăхсемпе усă курма тăрăшмасть. Кашни колхоз руководителĕ умĕнче пĕтĕм ĕçе тĕрĕс организацилес, çапла вара тырпула харпăрхăй вăйĕпех пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес задача тăрать.

Парти райкомĕсен колхозсемпе совхозсенче тата МТС-сенче массăллă-политикăллă ĕçе анлăн сармалла, тырпула хăвăртрах пухса кĕртессишĕн ялти ĕççыннисем хушшинче социализмлă ăмăрту организацилемелле.

Вунăкунлăхра лартнă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешнипе пĕрлех колхозсен кĕрхи тырăсене те акса пĕтермелле, государствăна тыră памалли пилĕккунлăх заданисене пĕр пăркаланмасăр тултарса пымалла. Çаксем вĕсем пурте—Тăван çĕршывăн çирĕп заданийĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсене пурне те кăтартнă срoксенче пурнăçа кĕртмелле.

Вăрçă ăнăçлă пĕтнине уйхирте паттăрла çĕнĕ ĕçсем тунипе палăртар, пуян тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртер, аслă Совет çĕршывĕн çарпа экономика хăватне татах та ытларах ӳстерер!

Ӳкерчĕк çинче: пирĕн чаплă земляк — Совет Союзĕн Геройĕ Н. Захаров. Вăл — Шупашкартан. Шупашкарти Аэроклубран, унтан çар летчикĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă.

П. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

НКПС-ăн Канашри вагонсем юсакан заводне Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Канашри вагонсем юсакан завода хута янăранпа 10 çул çитнине палăртас тесе, Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче чугун çулсем валли вагонсемпе хăйне уйрăм формированисем юсаса парас тĕлĕшпе уйрăмах паха ĕçленĕшĕн Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн Канашри вагонсем юсакан заводне Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули,
1945 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

НКПС-ăн Канашри вагонсем юсакан заводĕнчи уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

НКПС-ăн Канашри вагонсем юсакан заводне хута янăранпа 10 çул çитнĕ май, Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче чугун çулсем валли вагонсемпе хăйне уйрăм формированисем юсаса парас тĕлĕшпе ăнăçлăн ĕçленĕшĕн заводри уйрăмах палăрнă çак рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Константин Степанович Абрамова — завод отделĕн начальникне.
2. Антонина Павловна Ворожейкинăна—гараж шоферне.
3. Иван Гаврилович Гаврилова—вагонсем тăвакан цехăн хатĕрлевçине.
4. Василий Сергеевич Горячева—ТЭЦ турбинин машинистне.
5. Мария Сергеевна Громовăна — ТЭЦ бухгалтерне.
6. Александр Владимирович Ильина — производство отделĕн старши инженерне.
7. Сергей Васильевич Краснобаева — вагонсем юсакан цехăн мастерне.
8. Григорий Васильевич Краснова — ВКП(б) Канаш горкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарьне.
9. Иван Андреевич Кузнецова — опис бюровĕн мастерне.
10. Федор Кузьмич Кузьмина—юсавлă утилизаци цехĕн газосварщикне.
11. Дмитрий Иванович Козлова—рессорăпа пружина цехĕн начальникне.

(Юлашки пулать).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Оперативнăй сводка

Сентябрĕн 3-мĕшĕпе 4-мĕшĕнче Инçетри Хĕвелтухăçĕнче улшăнусем пулман.

СОВИНФОРМБЮРО

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Оборонăн Государственнăй Комитетне пĕтересси çинчен

Вăрçă пĕтнине пула тата çĕршыври йывăр лару-тăру иртсе кайнине пула, Оборонăн Государственнăй Комитетне малашне тытса тăма кирлĕ мар тесе йышăнас, çавăнпа та Оборонăн Государственнăй Комитетне пĕтерес, унăн мĕнпур ĕçĕсене Халăх Комиссарĕсен Советне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи сентябрĕн 4-мĕшĕ.

Ӳкерчĕк çинче: пирĕн чаплă земляк—Совет Союзĕн Геройĕ А. Рогожников. Вăл — Шупашкартан. Вăрçăччен Юсав конторинче платниксен бригадин бригадирĕ пулса ĕçленĕ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Çĕнĕ тапхăр çĕнĕлле ĕçлеме хушать

ЕТĔРНЕ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем Сталин юлташ пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă чарăнни çинчен тухса каланине тулли кăмăлпа итлерĕç. Ĕнер ВКП(б) райкомĕ районри парти активне пухса семинар туса ирттерчĕ. Семинар хыççăн районри колхозсене 40 агитатор тухса кайрĕ. Çав кунхех чылай колхозсенче митингсем пулса иртрĕç.

Митингсем Кăкшăм ял Советĕнчи Ильич ячĕпе тăракан; Пăчанарти «Победитель», Пăрçырланти Ворошилов ячĕпе тăракан, Мăн Сĕнтерти «Комбайн» тата «Великан» колхозсенче пысăк çĕкленӳпе иртрĕç.

Ильич ячĕпе тăракан колхозра Сталин юлташ халăха чĕнсе каланине ВКП(б) райкомĕн уполномоченнăйĕ М. Здорнов ăнлантарса пачĕ.

— Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи вăрçă вучахне—Япони агрессине çапса аркатнă. Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчери халăхсемшĕн мирлĕ пурнăç пуçланчĕ. Эпир вăрçă вăхăтĕнче вăй-хала шеллемесĕр ĕçлерĕмĕр пулсан, халĕ хамăр Тăван çĕршыва чечеклентерсе, аталантарса пымалли тапхăрта та кăтартуллăн ĕçлĕпĕр,—терĕ вăл.

Колхоз председателĕ К. Нарядов, пĕтĕм колхозниксен шухăш-кăмăлне палăртса, митингра çапла каларĕ:

— Эпир кĕтнĕ кун—аслă çĕнтерӳ кунĕ çитрĕ. Çак савăнăçлă тапхăрта эпир пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕпĕр. Тăван çĕршывăн вăй хăватне аталантарса пырас ĕçре тырпул чи пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, эпир государствăна тыră памалли плана сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех тултарăпăр.

Я. СОРОКИН.

Ик-виçĕ хут тухăçлăрах ĕçлеме пулаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Японие çĕнтерĕ ятпа паян ирхине Судоверфь коллективĕн пухăвĕ пулчĕ. Унта юлашки хыпарсене Судоверфь директорĕ Жиличкин юлташ каласа пачĕ. Вăл пирĕн Хĕрлĕ Çар Германи фашизмĕпе Япони империализмне çĕнтерни çинчен каларĕ, мирлĕ строительство тапхăрне куçнă май, Судоверфь коллективĕ умĕнче тăракан задачăсемпе паллаштарчĕ.

Судоверфе малалла аталантармалли пилĕкçуллăх план тунă. Çав план тăрăх, капитальнăй строительство валли 2.243.000 тенкĕ тăкакламалла. Продукци туса кăларасси, 1940 çулхипе танлаштарсан, 1950 çул тĕлне 340 процент чухлĕ ӳсмелле. Пурăнмалли çуртйĕрсене тăвас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тума палăртнă. Сăмахран, 200 çын пурăнмалăх общежити, стахановецсем валли 16 хваттерлĕ çурт, 20 койкăллă больница тумалла.

Пухура рабочисем тухса калаçрĕç. Рабочи Хлебников пилĕкçуллăх плана пурнăçа кĕртес тесе пурин те икĕ-виçĕ хут тухăçлăрах ĕçлеме кирли çинчен каларĕ. Мастер Муравьев хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине астутарчĕ.

И. САЛАМБЕК.

Ĕçри çĕнĕ çĕнтерӳсемшĕн

ИШЛЕЙ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вĕçленни çинчен Сталин юлташ радиопа тухса каланине илтсенех, районри колхозсенче митингсем пулса иртрĕç. Агитаторсем хиртех Сталин юлташ чĕнсе каланине колхозниксене ăнлантарса параççĕ.

Ишекри «Гвардия» колхозра хиртех митинг пулса иртрĕ. Колхоз председателĕ Е. Семенова юлташ пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вĕçленни тата мирлĕ самана пуçланни çинчен каласа парать. Колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташăн сăмахĕ çине ĕçпе ответлеме пулчĕç. Колхоз ыран пур тĕрлĕ тырăсене те вырса пĕтерет. Халĕ колхозри пĕтĕм вăя авăн çапас тата государствăна тыră парас ĕçе мобилизацилеççĕ. Транспорт бригади (бригадирĕ В. Эрибанов юлташ) государствăна тыră памалли кулленхи графика тултарса пырать.

В. ГУСЬКОВ.

Советски районри колхозсенче

Советски районри Тури Ачакри Кутузов ячĕпе тăракан колхоз ыраша плана пăхнинчен икĕ кун малтан вырса пĕтерчĕ. Колхозниксем пур ĕçе те уйрăм сдельщинăпа туни ĕç тухăçлăхне ӳстерет. Кунта кăнтăрла кăна мар, çĕрле те тыră выраççĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозра 2 жнейкăпа тата çурласемпе тыră выраççĕ. Кулленхи нормăна машиноведсем те, çурлапа выракансем те ирттерсе тултараççĕ. Çамрăксем кăна мар, ватăсем те хастарлăн ĕçлеççĕ. 80 çулхи Касьяновăпа 67 çулхи Кондукторова кашни кунах 0,15—0,17 гектар выраççĕ. В. Русаков ертсе пыракан бригада малта пырать, вăл колхозри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава илме тивĕç пулчĕ. Çак икĕ колхозра агитацилле-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Стена хаçачĕсемпе «Боевой листоксем» яланах тухса тăраççĕ, агитаторсем хиртех калаçусем ирттереççĕ тата хаçатсенчен статьясем вуласа параççĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозра культпалатка пур. Вăл час-часах колхозниксем ĕçленĕ çĕрте пулать.

Лапракассинчи «Электросвет» колхозра та тырпул пухса кĕртес ĕç ăнăçлă пырать. Кунта кулленхи нормăна тултарайман пĕр колхозник та çук. Колхоз государствăна тыră памалли графика ытлашшипех тултарса пырать.

«Красный партизан» колхоз хура тулă, пăрçа, тулă вырса пĕтерчĕ. Сĕлле çавапа çулаççĕ тата машинăпа выраççĕ. Колхозра вăкăрсемпе туллин усă кураççĕ. Вĕсемпе кĕлте кĕртсе авăн çапаççĕ, государствăна тыră леçсе параççĕ.

Районра юлса пыракан колхозсем те пур. «Социализм» колхоз кăçал ытла та начар ĕçлет. Кунта колхозниксем кунне 6—7 сехет çеç ĕçлеççĕ. Вĕсем ытларах хăйсене валли утă çулаççĕ. 20 колхозник ĕçкунĕсен минимумне тултарман. Тыра вырнă çĕрте тăкак нумай тăваççĕ: кашни тăваткал метра 30—40 пучах выртса юлать. Тушкассинчи Володарский ячĕпе тăракан колхозра та тырпул пухса кĕртес ĕç сӳрĕккĕн пырать. Колхоз председателĕ Шойкин юлташ, тырпул пухса кĕртес ĕçе организацилес вырăнне, пула тытса çӳрет.

Я. СИГАЕВ.

Сывă пултăр çĕнтерӳ!

Кĕр хĕвелĕ тараватлăн шăранать.
Пит те капăр çут çанталăкăн кулли!
Сасă кайрĕ савăк хумлăн таврана,
Праçник çитрĕ пирĕн чунăмăр тулли.

Аслă Сталин, çут хĕвелĕмĕр, çак ир
Саламларĕ ăшă кăмăллăн пире:
Пархатарлăн чĕрке йăтрăмăр эпир.—
Çĕнĕ ĕмĕр! Саншăн усăлчĕ чĕре!

Тăвăл иртрĕ. Кĕрлемест тек аслати,
Кĕтнĕ куншăн ăрамланчĕ асамат,
Чечеклентĕр лăпкă пурăкăç калчи,
Ылттăн хумлăн çĕкленейтĕрччĕ самант!

Канăç çитрĕ пĕтĕм сутă тĕнчене,
Ырлăх пултăр сана, Ирĕклĕ Этем!
Иртнĕ хурлăх хуйхине эс сирсенĕх—
Халăх тупĕ ĕмĕр кĕтнĕ тивлете.

Тек урăймĕ самурайĕ тухăçра,
Сăхă кумĕç сăхланаймĕ анăçран.
Шурăмпуç пек янкăр тăрă пурнăçра
Хăратаймĕ пире вилĕм тупăкран.

Ялтăрать Тăван çĕршывăмăр паян.
Ĕмĕт çутă. Вăйхăватăмăр хĕрӳ.
Эпĕр паттăррăн янратăпăр ялан:
Сывă пултăр пирĕн чаплă Çĕнтерӳ!

Тав тăватпăр Аслă Сталина эпир:
Чыс, салам, тăван çулпуçăмăр, сана!
Эсĕ пирĕн полководец — командир,
Сывă пурăн ĕмĕр-ĕмĕр, яланах.

Илья ТУКТАШ.

Вунăкунлăха ирттерме çирĕп план тунă

ОКТЯБРЬСКОЕ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Тĕштырăсене пухса кĕртес ĕçе вĕçлемелли вунăкунлăха ирттересси çинчен ВКП(б) Обкомĕ йышăннă постановлени кашни колхозрах сӳтсе-явса, вунăкунлăха ирттерме çирĕп план тунă. Паянхи кун тĕлне тĕштырăсене тата пăрçа йышши тырăсене районра икĕ колхоз кăна вырса пĕтернĕ. Ытти колхозсенче тыра вырас ĕç хĕрӳллĕ пырать. Чылай колхозсем çак вунăкунлăхра вăрлăхлăх хăварнă куракăсене тата техникăллă культурăсене пухса кĕртме палăртнă.

«Красная Чувашия» колхоз районра чи малтан çуртырриссене вырса пĕтерчĕ. Кунта вунăкунлăхра кая юлса çитĕнекен тырăсене те вырса пĕтерме шутлаççĕ. Колхоз ыраш акса пĕтернĕ. Пĕтĕм çĕр лаптăкне машинăпа ретĕн-ретĕн акнă. А. Чупраковпа М. Павлов юлташсем тыра акнă чухне кулленхи нормăна 130—140 процент тултарса пынă. Кĕрхи акара ĕçленĕ колхозниксем халĕ кĕрхи сĕртме тума та тытăннă. Паянхи кун тĕлне 10 гектар кĕрхи сĕртме тунă. Сентябрь уйăхĕ вĕçленнĕ тĕле кĕрхи сĕртме туса пĕтерме йышăннă.

Вунăкунлăхра хирти тырăсене капана хывса тата çапса пĕтерме шутлаççĕ. Кĕлте турттарас ĕçре вăкăрсемпе анлăн усă кураççĕ. Николай Одинцов тата Варсанофий Белебенцев вăкăрсемпе кĕлте турттарас ĕçре нормăна ирттерсе тултарнă.

«Красная Чувашия» колхоз хăмла туса илессипе районра кăна мар, республикăра та паллă вырăн йышăнать. Колхозăн хăмла плантацийĕ 8 гектара яхăн шутланать. Хăмла кăçал калама çук лайăх пулнă. Хмелевод Тимофей Мотков юлташ каланă тăрăх, кашни гектартан 15 центнертан кая мар хăмла пухăнать. Халĕ колхозниксем массăллă хăмла татаççĕ.

Ĕнер çак колхозра хиртех массăллă митинг пулса иртнĕ. Колхозри агитаторсем А. Одинцовпа Н. Тюмеров юлташсем вăрçă эпир çĕнтернипе вĕçленнĕ май Сталин юлташ чĕнсе калани çинчен колхозниксене каласа панă. Колхозниксем вунăкунлăхра ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçлессишĕн аслă Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса ĕçлеме сăмах панă.

Чкаловски тата Елчĕк МТС-сĕсем хăйсен планĕсене тултарнă

Чкаловски МТС тракторсемпе тумалли султалăкри ĕç планне 103 процент тултарнă. Çак МТС-ĕнчи комбайнерсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Хасим Валеев комбайнер 130 гектар, Львовпа Андреева комбайнерсем кашниех 110-шар гектар вырса пухнă. Çапла вара вĕсем хăйсен планĕсене ирттерсе тултарнă.

Елчĕк МТС-ĕ те тракторсемпе тумалли султалăкри плана тултарнă. Халĕ МТС-ăн 19 комбайнĕ колхоз уйхирĕсенче ĕçлеççĕ. А. Ефимовпа Е. Чернов комбайнерсем хăйсен планĕсене ытлашшипех тултарнă. А. Чернов комбайнер «Трактор» колхозра комбайнпа 130 гектар тыră çапса панă. МТС паянхи кун тĕлне комбайнсемпе 1550 гектар вырса пухнă.

ВĂРНАР МТС-ĕ КОМБАЙНСЕМПЕ ТЫРА ВЫРСА ПУХМАЛЛИ ПЛАНА 103,8 ПРОЦЕНТ ТУЛТАРНĂ

Вăрнар МТС-ĕ сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 1454 гектар вырса пухнă, çапла вара хăйĕн планне 103,8 процент тултарнă.

МТС тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана 138 процент, вăл шутра газогенераторлă тракторсемпе ĕçлемелли плана 118,2 процент тултарнă. Кĕраки тумалли плана 105 процент тултарнă. 1588 гектар çинчи тырра молотилкăсемпе çапнă.

КӲРШĔРИ КОЛХОЗА ПУЛĂШАÇÇĔ

Куславкка районĕнчи Варасăрти «Правда» колхоз августăн 28-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсене вырса пĕтерчĕ. Халĕ кӳршĕри Чашлака колхозне тырпул вырса пулăшма, ятарласа пĕр бригада янă.

С. МИШУТКИН.

И. В. Сталин Гроза господина йышăнни

Сентябрĕн 4-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Генералиссимус И. В. Сталин Румыни Премьер-Министрне П. Гроза господина йышăннă.

Йышăнура Совет Союзĕ енчен çаксем пулнă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕсем А. Я. Вышинский тата В. Г. Деканозов, Румынири Посол С. И. Кавтарадзе, союзниксен Румынири Контроль Комиссин Председателĕн заместителĕ И. З. Сусайков генерал-полковник; Румыни енчен çаксем пулнă: Вице-Премьер тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен министрĕ Татареску господин, çулйĕр тата обществăллă ĕçсен министрĕ Г. Деж господин, çутĕç министрĕ С. Войтек господин, СССР-ти Посол П. Иордан господин тата перемири условийĕсене пурнăçа кĕртекен Комиссин председателĕ М. Гельмеджану господин.

Канашри вагонсем юсакан завод 10 çул тултарчĕ

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ завода ĕçе янăранпа 10 çул çитнине уявласа ирттерчĕ.

Клуба стахановецсемпе стахановкăсем инженерсемпе техниксем, завод руководителĕсем тата хăнасем пухăннă.

Чаплă пухăва ВКП(б) Центральный Комитечĕн заводри парторгĕ Дмитриев юлташ уçать.

Пуху президиумĕнче—ВКП(б) Обкомĕн Секретарĕ Чарыков юлташ, Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ Матвеев юлташ, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Партя Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Логвин юлташ, Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссарĕ генерал-майор Белолипецкий юлташ, ВКП(б) Канаш хула комитечĕн секретарĕ Киреев юлташ, Канаш хула совет исполкомĕн председателĕ Кизилов юлташ, завод начальникĕ Поздняков юлташ, Совет Союзĕн Геройĕсем Поляковпа Федоров юлташсем тата ыттисем те.

Пысăк кăмăлпа хавхаланса, пуху хисеплĕ президиума ВКП(б) Центральный Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюро составне суйлать.

Юбилей ячĕпе килнĕ саламсене вуласа пана хыççăн завод ĕçĕсем çинчен доклад тума завод начальникне Поздняков директор-полковника сăмах параççĕ.

Поздняков юлташ заводăн 10 çул хушшинчи ĕçĕсем çинчен, хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлекен рабочисемпе инженерла-техникла работниксем çинчен калать. Унтан вăл Чăваш республикинчи ĕççыннисем тата ертсе пыракан организацисем завода пысăк пулăшу пани çинчен калать. Юлашкинчен вăл завод коллективĕ умĕнче тăракан задачăсем пирки чарăнса тăрать.

Пуху Çулйĕр Халăх Комиссарне Ковалев юлташа, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомне саламсем яма йышăнчĕ.

Пысăк çĕкленӳпе тăвăллăн ал çупса, пухăва пухăннисем аслă Сталин патне салам çыру яма йышăнчĕç.

Тĕп тинĕс-çар музейĕ Лăпкă океан çине экспедици ярать

ЛЕНИНГРАД, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Лăпкă океан çинчи флотпа Амур çинчи çар флотилийĕ, Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи офицерсем, старшинасем, краснофлотецсем, Япони захватчикĕсене хирĕç хăюллăн кĕрешсе, пирĕн Тăван çĕршывăн чапне хăпартрĕç.

Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи çапăçусем çинчен калакан япаласене пухма Лăпкă океана Амур çине Ленинградран Тĕп тинĕс-çар музейĕн экспедицийĕ тухса каять.

Çав экспедици Инçетри Хĕвелтухăçĕнчен пухса илекен япаласем музейăн Российăпа Японии 1904 çулхи вăрçи çинчен калакан пайне, çавăн пекех тата халĕ çĕнĕрен уçăлакан «Тинĕс-Çар флочĕ 1941 — 45 çулсенчи Отечественнăй аслă вăрçăра» ятлă пая каяççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх хисепĕпе тухăçлăхне малалла ÿстерессишĕн

А. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ

СССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1945 çулта колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ÿстермелли государство планĕ çинчен» йышăннă постановленире кăтартса панинчен пирĕн республикăри совет, парти тата çĕрĕç органĕсем практикăлла выводсем турĕç, колхоз выльăх-чĕрлĕхне ÿстерес ĕç çине тимлĕнрех çавăрăнса пăхма пуçларĕç, çав ĕçре чылай пысăк çитĕнÿсем турĕç. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1945 çулхи государство планне республикăри колхозсем августăн 1-мĕшĕ тĕлне çакăн чухлĕ тултарнă: ĕнесемпе вăкăрсем енĕпе—102,4 процент, сыснасем енĕпе—124,8 процент, сурăхсем енĕпе—131,4 процент, лашасем енĕпе—101,2 процент.

Кăçалхи 7 уйăх хушшинче тĕрлĕ выльăхсен хисепĕ çакăн чухлĕ ÿснĕ: ĕнесемпе вăкăрсем—5,8 процент, сыснасем — 28,1 процент, сурăхсем—41,3 процент, лашасем—4,6 процент. Республикăри 30 районтан 25-шĕ тухăçлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана, 19-ăшĕ—лашасем ĕрчетмелли плана пĕтĕмпех тата иртерсе тултарнă. Пĕлтĕрхи шайран кăçал ĕнесен хисепĕ 7,7 процент, пăранламалли сурăхсен хисепĕ 4,1 процент ÿснĕ. Красноармейски районри колхозсенче кăçалхи 7 уйăх хушшинче лашасен хисепĕ 8,0 процент, ĕнесемпе вăкăрсен хисепĕ—10,0 процент, сыснасен хисепĕ—49,9 процент, сурăхсен хисепĕ—55,1 процент ÿснĕ. Çавăншăн Красноармейски район Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçа çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ ÿснипе пĕрлех колхозниксен хăйсен килĕнчи выльăхсен хисепĕ те чылай ÿснĕ. 1945 çул хушшинче колхозниксен хуçалăхĕсенче ĕнесемпе вăкăрсен хисепĕ 38,4 процент, сыснасен хисепĕ 55,0 процент, сурăхсен хисепĕ—50,6 процент ÿснĕ.

Выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ÿстермелли плана тултарнипе пĕрлех республикăри колхозсем нумайĕшĕ государствăна какай памалли обязательствăна та ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Малта пыракан нумай колхозсемпе районсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене пурне те срокчен пурнăçласа пыраççĕ. Çапла, акă, Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ĕнесемпе вăкăрсем енĕпе 103,1 процент, сыснасем енĕпе 126,3 процент, сурăхсем енĕпе 100,3 процент тултарнăскерсем, государствăна какай, сĕт, çăмарта, çăм памалли çур çулхи плана вăхăтĕнче тата иртерсе тултарнă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе колхозсем тунă çитĕнÿсем вĕсем совет, парти тата çĕрĕç органĕсем, çавăн пекех тата ялхуçалăхĕнчи специалистсемпе мĕнпур животноводсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, колхоз фермисенчи ама выльăхсен хисепне ÿстерес, ама выльăхсем хĕсĕр юлнине пĕтерес тата çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас тĕлĕшпе хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçленинчен килнĕ.

Кăçал пирĕн республикăри колхозсем çамрăк выльăхсем вилессине чылай чакарчĕç. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан, кăçал тихасем 5,7 процент, пăрусем—15,3 процент, сысна çурисем—8,1 процент, путексем —33,8 процент сахалтарах вилнĕ. Çамрăк выльăхсен хисепĕ те пĕлтĕрхинчен ытларах ÿснĕ. 1944 çулта кашни 100 ама выльăхран 20 тиха, е 62 пăру, е 43 путек илнĕ пулсан тата кашни сысна ами 3,6 çурă çурланă пулсан, кăçалхи 7 уйăх хушшинче кăна кашни 100 ама выльăхран 32 тиха, е 78 пăру, е 94 путек тата кашни сысна аминчен 4-шар сысна çури илсе сыхласа хăварнă. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх хисепĕ ÿснипе пĕрлех унăн пахалăхĕ те (чи малтан—ăратлăхĕ) ÿссе пынă. Республикăра таса ăратлă выльăхсен фермисене çакăн чухлĕ тунă: майракаллă шултăра выльăх фермисем — 20 (вĕсенче 1.711 пуç выльăх пур), ăратлă сысна фермисем—22 (вĕсенче 1.441 сысна пур), ăратлă сурăх фермисем—5 (вĕсенче 4.405 сурăх пур), ăратлă лаша фермисем—11 (вĕсенче 848 лаша пур).

Колхозсене ăратлă выльăх туянтарас ĕçре колхозсен ăратлă выльăх фермисемсĕр пуçне государствăн Сăрă леш енчи лаша завочĕ, Çĕрпÿри государство вити тата селекци станцийĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Республикăри малта пыракан нумай колхозсемпе животноводсем те обществăллă выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстерес, унăн тухăçлăхне хăпартас тата çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас тĕлĕшпе чылай пысăк çитĕнÿсем турĕç. Çапла, акă, Çĕрпÿ районĕнчи «Новая жизнь» колхозăн ăратлă лаша фермин заведующийĕ Е. Ф. Карышев юлташ çуллен лайăх юратакан темиçе вунă лаша ÿстерсе парать. Çав ферма кăçал лаша ĕрчетмелли плана чылай иртерсе тултарнă, 23 кĕсререн 21 тиха илнĕ.

Чурачăк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри сурăх пăхакан Мария Филиппова кăçал 25 сурăхран 37 путек илсе сыхласа хăварнă. Шăмăршă районĕнчи «Трнер» колхозри сурăх пăхакан М. Прокопьева 89 сурăхран 108 путек илнĕ. Чкаловски районри «Броневик» колхозри сысна пăхакан Тактынова юлташ 8 сысна аминчен 14-шар çурă илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстернĕшĕн, çамрăк выльăхсем ÿстермелли плана иртерсе тултарнăшăн тата çитĕннĕ выльăхсене сыхласа хăварнăшăн колхозниксене хушса тÿлени пысăк вырăнта тăрать.

1944 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракан çынсене пурĕ 1.019 çынна ĕçшĕн хушса тÿленĕ. 826 çынна 1945 çулхи пĕрремĕш кварталти задание иртерсе тултарнăшăн хушса тÿлеççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ăнăçлăн аталантарасси нумай енчен колхозсенчи животноводсенчен килет. Çавăнпа та животноводсене тупса ĕçе лартас, çирĕплетсе хурас тата вĕрентес ĕç çине республикăрипе районсенчи организацисем тимлĕн çавăрăнса пăхрĕç. Кăçал кĕске срокла курссемпе семинарсенчен 731 животновод, 1944 çулта—944 животновод вĕрентсе кăларнă. Темиçе çул хушшинче выльăх-чĕрлĕх хисепĕ ÿссе пыни обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ таран апат хатĕрлес тата выльăхсене хĕллехи вăхăтра усрама лайăх çуртсем хатĕрлес задачăна кăларса тăратрĕ.

Выльăх апачĕ ытларах хатĕрлес тесе, кăçал суркунне фермăсем çумĕнчи участоксенче выльăх апатне кайкан культурăсем 6.738 гектар акнă, урăхла каласан, пĕлтĕрхинчен 1.556 гектар ытларах акнă, кашни колхоз пуçне, вăтамран илсен, 4,1 гектар акнă. 1945 çулхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсем 148 пин тонна силос хывнă, 29.626 лав милĕк, 1.807 тонна вĕлтĕрен, 1.195 тонна армути хатĕрленĕ.

Чăваш республикинчи колхозниксем выльăх-чĕрлĕх хисепĕпе тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе лайăх ĕçлерĕç. Анчах çак ĕçре пирĕн республикăри колхозсен пысăк çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Республикăра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарнă пулсан, çав плана пирĕн хăшпĕр районсемпе колхозсем тултарайман-ха. Улатăр, Йĕпреç, Канаш, Куславкка, Кувакино районĕсем плана хăшпĕр выльăхсем енĕпе 74 процентран пуçласа 99 процента çити çеç тултарнă.

Хăшпĕр районсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана малта пыракан колхозсем хăйсен планне иртерсе тултарнă пирки çеç тултарнă. Сăмахран, Тăвай районĕ, пĕтĕм районĕпе илсен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана иртерсе тултарнă. Анчах та унта тухăçлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана 33 колхозран 12-шĕ çеç тултарнă, мĕнпур йышши выльăх-чĕрлĕхсем енĕпе вара 6 колхоз çеç тултарнă.

Уйрăм колхозсемпе районсем выльăх-чĕрлĕхе çаплах кирлĕ мар çĕре яраççĕ. Çавăн пирки июль уйăхĕнче пирĕн республикăра ĕнесемпе вăкăрсен хисепĕ 0,7 процент, сурăхсен хисепĕ—1,0 процент, лашасен хисепĕ—0,4 процент чакнă. Улатăр районĕнче 30 колхозран плана лашасем енĕпе 25 колхоз, ĕнесемпе вăкăрсем енĕпе—14 колхоз, сыснасем енĕпе—19 колхоз, сурăхсем енĕпе—10 колхоз тултарман. Çав район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарман пулин те, июль уйăхĕнче унта майракаллă шултăра выльăх 63 пуç тата 747 сысна ытти çĕре кайнă.

Ĕç çапла пынă пирки выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана çулталăк пĕтнĕ çĕре хăшпĕр районсем тата пĕтĕм республика та тултараймасăр юлма пултараççĕ. Выльăхсене сыхласа хăварма халех кирлĕ мерăсем йышăнмалла. Плана фермăсенче çуралса ÿсекен выльăхсемпе тултарайман колхозсенче çав фермăсем валли халех çамрăк выльăхсене колхозниксемпе рабочисенчен тата служащисенчен илмелле. Кашни колхозăн планран ытлашши выльăх пулмалла, çав выльăх государствăна какай памалли плана тултарма, колхоз нушисене саплама тата колхозниксене, Отечественнăй вăрçă инваличĕсене, çартан таврăннисен çемьисене пулăшма кирлĕ.

Çакна асра тытмалла: выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тата государствăна какай памалли плана тултарасси вăл пĕр ăнлав, пĕр япала пулса тăрать, пĕрне тепринчен уйăрма юрамасть. Çавăнпа, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарассишĕн кĕрешсе, выльăх-чĕрлĕх продукцине государствăна парас ĕç çине çаврăнса пăхман колхозсемпе районсем йăнăш тăваççĕ. Выльăха кĕркуннехи уйăхсенче çеç йышлăн пама пуçлани те йăнăш. Малашне апла тума юрамасть.

Государствăна 1945 çулшăн какай парса татнă колхозсене кăçал СССР Союзĕн Совнаркомĕ III-мĕшпе IV-мĕш кварталсенче 1946 çулшăн аванс шучĕпе какай пама ирĕк панă. Правительство йышăннă тăрăх, 1946 çулшăн аванс шучĕпе панă выльăха выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1945 çулхи плана тултарнă шута кĕртеççĕ. Колхозсене çавăн çинчен лайăх ăнлантарса памалла, аванс шучĕпе какай парассине организацилемелле.

Анчах государствăна аванс шучĕпе какай парас ĕç, тĕрессипе илсен, сарăлман-ха. Пĕлтĕр августăн 20-мĕшĕ тĕлне колхозсем государствăна 1945 çулшăн аванс шучĕпе 799 центнер какай панă пулсан, кăçал августăн 20-мĕшĕ тĕлне 1946 çулшăн аванс шучĕпе 104 центнер кăна панă. Районсемпе колхоз руководителĕсен, 1945 çулшăн какай парса татса, 1946 çулшăн аванс шучĕпе какай парас ĕçе халех организацилемелле.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе выльăхсем вилни нумай сиен кÿрет. Анчах çамрăк выльăха сыхласа хăварассишĕн пур çĕрте те тивĕçлипе кĕрешмеççĕ-ха. Çамрăк выльăхсене йышăнас тата сыхласа хăварас ĕç çине кирлĕ пек çаврăнса пăхман пирки, кăçалхи 7 уйăх хушшинче тихасем, пăрусем, сысна çурисем тата путексем чылай вилнĕ. Çамрăк выльăхсем пуринчен ытла Шупашкар, Первомайски, Çĕрпÿ, Ишлей тата Йĕпреç районĕсенче нумай вилнĕ.

Çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăвармашкăн кашни фермăрах вĕсене йышăнма тата пăхса ÿстерме кирлĕ условисем туса хумалла, вĕсене усрама таса, типĕ тата çутă çуртсем тумалла, вĕсене лайăх апат памалла тата лайăх пăхмалла. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçа кĕртесси çав çамрăк выльăхсене сыхласа хăварнинчен килет.

Çамрăк выльăхсене сыхласа хăварнипе пĕрлех выльăхсен хисепне ÿстермешкĕн тата ама выльăхсен хисепне ÿстермелле. 1945 çулхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн колхозсенче ĕнесен хисепне ÿстермелли плана 91,5 процент, сысна амисен хисепне ÿстермелли плана 88,5 процент кăна тултарнă. Хăшпĕр районсенче ама выльăхсен хисепĕ ÿсес вырăнне чакнă. Çапла, Муркаш районĕнче кăçалхи 7 уйăх хушшинче ĕнесен хисепĕ 1,3 процент чакнă, Елчĕк районĕнче сысна амисен хисепĕ 5,4 процент чакнă, Куславкка районĕнче вăл 19,3 процент таранах чакнă, Кувакино районĕнчи колхозсенче сурăхсен хисепĕ 10,5 процент чакнă. Ама выльăхсен хисепне сыхласа хăварма тата ăна ÿстерме тăрăшмалла.

Районсемпе колхозсен нумай руководителĕсем юлашки вăхăтра лашасем ĕрчетес ĕç çине сахалтарах çаврăнса пăхма пуçларĕç. Чылай районсенче лашасемпе усă курас тата вĕсене пăхас ĕçри обезличкăна пĕтермен-ха. Çакă лашасем ĕрчетес ĕçе пысăк сиен кÿрет. Кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне лашасене пăхса тухса çакна палăртнă: начарланма тытăннă лашасем 22 процент, начарланса çитнĕ лашасем 3 процент пулнă. Кувакино районне илсен, унта мĕнпур лашасенчен 12,7 проценчĕ вилнĕ. Кĕсресем хăм пăрахнисем те пур. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри специалистсен кĕсресем пĕтĕленнипе пĕтĕленменнине халех пăхса тухмалла та пĕтĕленнĕ кĕсресен хуçисене охраннăй свидетельствăсем памалла. Çав кĕсресене пăхма чи тÿрĕ кăмăллă колхозниксене хушмалла.

Мĕнпур лашасене хăйсен ут таврашĕпе тата транспорт инвентарĕпе пĕрле лашапа ĕçлеме лайăх пĕлекен колхозниксене çирĕплетсе памалла. Пĕр-пĕр лашана мĕнле колхозника çирĕплетсе панă, унпа çав колхозникăн çеç ĕçлемелле. Колхоз правленийĕ ирĕк парсан çеç лашана урăх çынна пама юрать. Лашана суранланăшăн е вĕлернĕшĕн айăплисенчен укçа шырса илес пулать.

Колхозри фермăсен пысăк çитменлĕхĕ вăл—выльăх тухăçлăхĕ выльăх хисепĕ ÿснинчен юлса пыни пулать. 1944 çулта сăвакан кашни ĕне пуçне план тăрăх 1.100 литр сĕт суса илмелле пулнă пулсан, 688 литр çеç суса илнĕ, пĕр сурăхран 2,2 килограмм çăм илес вырăнне 1,9 килограмм çеç илнĕ, çăмарта тăвакан пĕр чăхран 70 çăмарта вырăнне 42 çăмарта çеç илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстересси совет тата çĕрĕç органĕсен тата колхозсен чи кирлĕ задачисенчен пĕри пулмалла.

Хальхи вăхăтра колхозниксем выльăх-чĕрлĕх хисепĕпе тухăçлăхне ÿстерес ĕçри ответлă тапхăра кĕме—выльăхсене хĕллехи вăхăтра пăхса усрама хатĕрленеççĕ. Колхозсем выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕл валли мĕн чухлĕ лайăх хатĕрлесе хунинчен выльăх-чĕрлĕх хисепне малалла ÿстерес тата унăн тухăçлăхне хăпартас ĕç ăнăçасси килет. Хĕл вăхăтĕнче выльăхсем хăмлаççĕ, пăруласçĕ, çăвăрлаççĕ. Çавăнпа та çамрăк выльăхсене илсе пăхса çитĕнтермешкĕн вăхăтĕнче хатĕрленсе хумалла. Иртнĕ çулсенчи опыт çакна кăтартса пачĕ: выльăх-чĕрлĕх валли выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлесе хунă тата лайăх çуртсем тупса хунă колхозсем çамрăк выльăхсене лайăх сыхласа усранă. Анчах та нумай районсемпе колхозсем выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле кĕме хатĕрлес ĕçре васкамаççĕ. Нумай колхозсенче выльăх çурчĕсене тырă вырма тухиччен юсаса пĕтермен. Çапла, Улатăр районĕнче августăн 15-мĕшĕ тĕлне 2 лаша вити, 2 ĕне вити, 2 пăру вити, 1 сурăх вити, 1 сысна вити тата 2 чăх-чĕп вити çеç хатĕрлесе хунă. Ытти выльăх çурчĕсене юсаса пĕтермен.

Хатĕрлесе хунă выльăх апатне хисепе илес ĕç те начар пырать. Улатăр, Элĕк, Сĕнтĕр, Кувакино, Октябрьски тата Чурачăк районĕсенче çулса пухнă утта акт тăрăх ферма заведующийĕсене тата лаша ĕрчетес ĕçĕн заведующийĕсене паман. Хăшпĕр районсем сĕтеклĕ апат хатĕрлес ĕç çине çителĕклĕ çаврăнса пăхмаççĕ, çавăн пек апатсăр ĕнесене сĕт нумай паракан тума çук. Кувакино районĕнче силос хывмалли плана 43 процент çеç тултарнă.

Çитмен выльăх апатне хатĕрлес тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлемелле. Утта иккĕмĕш хут çулмалла, силос ытларах хывмалла, мĕнпур улăма тата арпана пухса хумалла, выльăх апатне шута илсе, ферма заведующийĕсемпе кладовщиксене акт тăрăх памалла. Хĕл вăхăтĕнче выльăхсене апат мĕнле нормăпа тата уйăхне мĕн чухлĕ памаллине палăртса хумалла.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри мĕнпур çитменлĕхсене пĕтересси, выльăх-чĕрлĕх хисепĕпе тухăçлăхне малалла ÿстересси совет, парти тата çĕрĕç органĕсен, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен чыслă ĕçĕ пулса тăрать. СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «1945 çулта колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх хисепĕпе тухăçлăхне ÿстермелли государство планĕ çинчен» йышăннă постановление çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла, выльăх-чĕрлĕхе хĕллехи вăхăтра пăхса усрама кăтартуллăн хатĕрленсе çитмелле.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх хисепĕпе тухăçлăхне малалла ÿстерес, пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура чи малти вырăна тухас тесе, пĕтĕм вăйпа ĕçлер.

Сталин юлташăн сăмахĕ çинчен ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин дипломатиллĕ обозревателĕ пĕлтернĕ тăрăх, Сталин Генералиссимус Кăнтăр Сахалина тата Японирен çурçĕртерехри Курильски утравсене Совет Союзĕ каялла илесси çинчен пĕлтерни Лондонри çынсемшĕн кĕтмен япала пулса тăмасть. Россия Инçетри Хĕвелтухăçри вăрçа хутшăнсанах çав территорине Совет Союзне таврăса парасси паллă пулнă. Çав территорие Совет Союзне таврăса парасси çинчен Потсдамран Японин халăхне чĕнсе калани çинче те палăртнă. Унта çапла каланăччĕ: Япони суверенитечĕ хăйĕн тĕп утравĕсем çинче тата «эпир суйласа паракан хăшпĕр пĕчек утравсем çинче» пулассĕ, тенĕччĕ.

Кăнтăр Сахалина вырăссемпе Япони хушшинчи 1904 çулхи вăрçă хыççăн Японие панă, Курильски утравсене вара XIX-мĕш ĕмĕрте японецсене панă пулнă. Вĕсем Совет Союзĕшĕн питĕ паха вырăнсем пулса тăраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем çинчен Совет Союзĕ Японин тĕп утравĕсене контроллесе тăма пултарать.

И. В. Сталин сăмахне Австралири хаçатсенче пичетленĕ

СИДНЕЙ, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Ирхине тухакан пур хаçатсенче те сентябрĕн 3-мĕшĕнче И. В. Сталин халăха чĕнсе калани текстне пичетлесе кăларнă. Çавăн пекех тата Совет Союзĕнче сентябрĕн 3-мĕшĕнче Японие çĕнтернин праçникĕ туса уявласси çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă.

Япони парăннă пирки Бирнс каласа пани

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). США-н государство секретарĕ Бирнс çапла каласа панă:

«Паянхи кун Японие хирĕç пынă вăрçăн тапхăрĕсенчен пĕри вĕçленнĕ кун пулса тăрать. США-н тата пирĕн союзниксен вăй-хăватне тата жертвисене пула, эпир хамăрăн вăйлă тăшманăн хĕçпăшаллă вăйĕсене пĕр сăмахсăрах парăнмалла турăмăр. Çав тăшман, эпир вăрçа хатĕр пулманнипе усă курса, хĕвеланăçри çĕршывсем Европăри вăрçа хутшăнса кайнипе усă курса, хĕвелтухăçĕнчи Азире çурçĕрти Маньчжурирен пуçласа кăнтăрти Инди океанĕ таранах çĕмĕрсе кĕрсе кайрĕ. Халĕ Японие физически хĕçпăшалсăрлантараççĕ, вăхăт çитсен эпир унăн тип çĕр çинчи, тинĕсри тата сывлăшри вăйĕсене пĕтерсе тăкса, унăн çар материалĕсемпе объекчĕсене пĕтерсе тăкса тата унăн çар промышленноçне турттарса кайса упран вăрçă вăрçмалли мĕнпур пултарулăхĕсене туртса илĕпĕр. Эпир Японие хирĕç пыракан вăрçăн иккĕмĕш тапхăрне пырса кĕретпĕр. Çак тапхăра çав çĕршыври халăха духовнăй хĕçпăшалсăрлантарас тапхăр тесе калама пулать. Ку тапхăр Япони халăхне вăрçă вырăнне миршĕн тăрăшакан тумалла. Çакă, хăшпĕр енчен илсен, физически хĕçпăшалсăрлантарассинчен чылай йывăртарах задача. Шухăш-кăмăлсене штыкпа е законсем кăларнипе улăштараймăн. Японецсене духовнăй хĕçпăшалсăрлантарас тесе, эпир пур чăрмавсене те пĕтерме шутлатпăр. Çав чăрмавсен шутне пусмăрлăха тÿрре кăларакан законсем, чăнлăх çулне манаçа кăларттаракан законсем, Японире демократие ирĕклĕн аталанса пыма чаракан законсем кĕреççĕ. Эпир шкулсенче тата халăх хушшинче националистла вĕрентÿсене пĕтерĕпĕр. Çав вĕрентÿсем çынсене хăйсен çар лидерĕсен милитаристла философийĕпе килĕштернĕ. Эпир пусмăрти хресченсем тата промышленность рабочийĕсем хушшинче демократиллĕ реформăсене аталантарса пырас тесе, тивĕçлĕ мерăсем йышăнăпăр. Рабочисемпе хресченсене хăйсен правительствине сасăласа суйламалли право парăпăр».

«Малашне эпир Японире халăхăн пур элеменчĕсем çине те аплăн таянса тăракан правительство пуласса шанатпăр. Вăл вара мире юратакан правительство пулĕ. Эпир те, пирĕн союзниксем те пулас правительство пĕтĕмĕшле мире юратнипе юратманнине сăмах тăрăх мар, унăн ĕçĕ тăрăх сÿтсе-явăпăр. Эпир çапăçу хирĕнче тата хамăрăн çĕршывăмăрта тунă жертвăсем тума хушакан задача çакăн пек ĕнтĕ. Турă пулăшнипе эпир ăна вĕçне çитиччен туса пĕтерессе шанатпăр».

Трук утравĕ çинчи японецсем парăнни

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Гуам утравĕ çинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Каролин утравĕсем шутĕнче тăракан Трук утравĕ çинчи японецсен пысăк тинĕс-çар базин сентябрĕн иккĕмĕшĕнче парăннă. Çав тинĕс-çар базине вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче союзниксен авиацийĕ час-часах тапăннă, ун çине бомбăсем нумай пăрахнă.

Японецсен Филиппин утравĕсем çинчи çарĕсен командующийĕ тыткăна парăннă

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Манила хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, японецсен Филиппин утравĕсем çинчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командующийĕ генерал-лейтенант Томоюки Ямасита сентябрĕн 2-мĕшĕнче ирхине американецсене тыткăна парăннă.

Япони шкулĕсенче обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентме пăрахни

ЛОНДОН, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Токио хулинчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн пĕрремĕшĕнче Япони правительстви шкулсенче обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентмеллине пăрахăçа кăларнă.

Чан Кай-ши халăха чĕнсе калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Чан Кай-ши генералиссимус халăха чĕнсе каланă. Çав чĕнÿре чылай реформăсем туса иртерессине тата чылай ĕçсенче вăрçă вăхăтĕнчи контроле (сăмахран, хаçат-журналсен цензурине) пăрахăçа кăларассине палăртнă. Чĕнÿре тата çапла каланă: правительство закон пичетлесе кăларĕ, çав закон тăрăх политикăллă ушкăнсемпе организацисене ĕçлеме ирĕк пулĕ. Çав законра политикăллă партисене ирĕккĕн ĕçлеме кăтартса памалла.

Сун Цзы-вень Оттавăра калани

ОТТАВА, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС) Китайăн ĕç тăвакан юанĕн председателĕ (премьер-министрĕ) Сун Цзы-вень Оттава хулинче сентябрĕн 1-мĕшĕнче пресс-конференцире сăмах каланă. Вăл Совет Союзĕпе Китай республики пĕр-пĕринпе договор туни питĕ кăмăла кайни çинчен пĕлтернĕ. Çав договор, тенĕ вăл, малашне Совет Союзĕпе Китай республики пĕр-пĕринпе çыхăнса тăрас ĕçре пысăк вырăн йышăнĕ, вăл Инçетри Хĕвелтухăçĕнче пурнăçа йĕркелесе тăракан пысăк фактор пулса тăрать пулмалла, тенĕ. «Россия Китай çине лайăх пăхать, вăл Китайпа туслăн пурăнма тăрăшать», тенĕ Сун Цзы-вень. Малалла Сун Цзы-вень Японие хирĕç пынă вăрçă пĕтни Китай халăхне лăплантарни çинчен, питĕ кăмăла кайни çинчен каласа панă. Япони агрессине пула Китайра халăх калама çук хытă асапланни те вăрçă пĕтнĕ хыççăн пĕтсе ларать, тенĕ.

Шалти ыйтусем пирки Сун Цзы-вень çапла каланă: Китай «демократин аслă çулĕпе» пыма шутлать, тенĕ. Китай ют çĕршывсемпе суту-илÿ тăвасси çинчен Сун Цзы-вень çапла каланă: Китайăн экономикăллă пурнăçне юсаса ура çине тăратасси ют çĕршывсенчен кирлĕ таварсем илсе килнинчен нумай килет, тенĕ. Малалла Сун Цзы-вень Китайри коммунистсемпе тĕп правительство Чунцинра калаçнă хыççăн вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнса тăрас ыйтăва пĕтĕмпех ăнăçлăн татса парĕç, тенĕ.

Канадăри çар предприятийĕсенчен рабочисене кăларса яни

ОТТАВА, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсенче пичетлесе кăларнă тăрăх, Канадăн индустри центрĕсенче, уйрăмах Торонтăпа Монреалре, кĕтмен çĕртенех çар предприятийĕсене хупса лартнă пирки рабочисене ĕçрен нумай кăларса яраççĕ. Тепĕр чухне малтан асăрхаттармасăрах кăларса яраççĕ.

Торонтăра, Монреалре тата Ванкуверте рабочисен массăллă митингĕсенче кĕтмен çĕртен кăларса янине хирĕçлесе резолюцисем йышăнаççĕ. Çав резолюцисенче правительствăран ĕççĕрлĕхе сирсе яма мерăсем йышăнма ыйтаççĕ.

Канадăри икĕ тĕп профсоюз организацийĕ—Канадăри ĕç конгресĕ тата Канадăри профсоюзсен конгресĕ—çак резолюцисемпе протестсене пĕтĕмпех ырлаççĕ.

Ĕç министерствипе реконструкци министерстви çар заводĕнчен кăларса янă пур рабочисене те ытти заводсенче ĕç тупса парасси çинчен темиçе хут та пĕлтернĕ. Çакна пула ĕнтĕ профсоюз представителĕсем çапла каласа параççĕ: Канадăн хăшпĕр вырăнĕсенче ĕç вăйĕ чылаях кирлĕ пулин те, индустри центрĕсенче вара предприятисенчен нумай рабочисене кăларса янă пирки, ĕçрен кăларса янисем хисепĕпе танлаштарсан, чылай сахалрах ĕç вăйĕ кирлĕ. Тата халь тупса паракан ĕçшĕн, вăрçă вăхăтĕнчипе танлаштарсан, чылай сахалрах тÿлеççĕ.

Тыткăнри итальянецсене ирĕке кăларасси çинчен

РИМ, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). СССР Правительстви Совет Союзĕнче тыткăнра пурăнакан итальянецсене ирĕке кăларма йышăнни çинчен Итали хаçачĕсем питĕ савăнса çыраççĕ. «Унита» хаçат çапла çырать: Совет Союзĕ Итали правительствипе пуринчен малтан йышăнса тата унпа ялан пек çыхăнса тăма пуçласа Итали нушисене ăнланнине кăтартса панăскер, халĕ, тыткăнри итальянецсене пуринчен малтан ирĕке кăларса, хăйĕн ырă кăмăлне кăтартать.

«Джорнале дель Маттино» хаçат каланă тăрăх, тыткăнри итальянецсене ирĕке кăларма йышăннине Италири мĕнпур ĕççыннисем хĕрÿллĕн ырлаççĕ.

Союзниксен Берлин комендатури ларăвĕ

БЕРЛИН, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 30-мĕшĕнче союзниксен Берлин комендатурин 8-мĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен генерал-майорĕ Паркс председатель пулса ертсе пынă. Ларура союзниксен çак коменданчĕсем пулнă: Совет Союзĕ енчен—Горбатов генерал-полковник, Англи енчен—Лайн, генерал-майор, Франци енчен бригаднăй генерал де Бошен.

Союзниксен комендатури союзниксене суту-илÿпе промышленность енĕпе ĕçлекен комитетне туннине ырланă. Çав комитета «Мăн Берлин» районĕнче тавар туса кăларассипе ăна валеçсе тăрассине контроллесе тăма хушнă.

Электричество энергине нормăпа парасси çинчен пулнă сĕнĕве ырланă. Берлина электричество энергийĕ парса тăракан «Берлинер Крафт унд лихтаг» ятлă обществăна Берлин хулине электричество парас ĕçе контроллесе тăма хушнă. Çапла контроллени электричествăна перекетлĕрех тыткалама пулăшмалла. Ларура çĕркăмрăк валеçсе тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет доклад тунă. Берлин комендатури доклада ырланă. Çав докладра каланă тăрăх, Берлинра çĕркăмрăк валеçсе тăрассишĕн пĕтĕм ответлăха Берлинри тĕп çĕркăмрăк ведомстви çине хураççĕ. Çак нимĕç ведомствин ĕçĕсене союзниксен çĕркăмрăк валеçсе тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн тĕплĕн контроллесе тăмалла.

Союзниксен коменданчĕсем Берлина беженецсем тата тыткăнран янă нимĕçсем нумай килсе тулнă пирки тухса тăракан ыйтăва сÿтсе-явнă. Ку ыйту пирки совет коменданчĕ Горбатов генерал-полковник çапла каланă: Берлин таврашĕнчи совет çарĕсем йышăнса тăракан зонăра çав пысăк ыйтăва татса парас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма пуçланă.

Союзниксен комендатури Берлинри пуринчен те интереслĕ пулса тăракан вырăнсене палăртмашкăн комисси уйăрса хунă. Çав комиссин, сăмахран, паллă памятниксене, суртйĕрсене, халăх пĕлме тивĕçлĕ вырăнсене палăртса хумалла. Çавăн пекех ларура экскурсисене ертсе çÿрес тĕлĕшпе мĕн тумаллине пăхса тухнă. Çав паллă вырăнсене экскурсисем хăш сехетсенче пымаллине палăртса хунă. Берлин обер-бургомистрĕ Нейкальнре сентябрь уйăхĕнче фашизма хирĕç кĕрешсе вилнĕ çынсен ячĕпе хулара митинг туса иртерме ыйтнă. Комендатура çак ыйтупа килĕшнĕ. Союзниксен комендатури Японие хирĕç пынă вăрçă пĕтнине официальнăй йĕркепе палăртма йышăннă. Çав майпа Берлинра палăртса хунă кун союзниксен парачĕ пулмалла. Кашни тăватă государствăран парадра пиншер çын тата бронетанковăй подразделенисем пулмалла.

Комендатура çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 23-мĕшĕнче «Олимпия» стадионĕнче спорт ăмăртăвĕсем пулса иртеççĕ. Комендатура тата çапла йышăннă: çав тăватă государство представителĕсем çак ăмăртусен планне туса сÿтсе-явмашкăн тата союзниксен футбол, волейбол тата баскетбол командисем тĕл пулас расписание тумашкăн пухăнмалла.

Лайн генерал-майор Германире çĕнĕ вырăн илнĕ, çавăнпа вăл комендатурăри хăйĕн союзник-юлташĕсемпе официальнăй йĕркепе сывпуллашса уйрăлнă. Вăл вĕсене пĕрле туслăн ĕçленĕшĕн тав тунă, малалли ĕçре çитĕнÿсем тума ырă суннă. Ларăва пухăннисен ячĕпе председатель пулса ертсе пынă Паркс генерал-майор Лайн генерал-майор кайни пирки шеллесе сăмах каланă, ун вырăнне килнĕ Нейрс генерал-майора саламланă.

Американ, Англин тата Францин çар влаçĕсем Вена хулинче хăйсене уйăрса панă районсене тытса тăма пуçланă

ВЕНА, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Австрири оккупациллĕ çарĕсен главнокомандующийĕ генерал Марк Кларк официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Америка влаçĕсем Вена хулинче вĕсене уйăрса панă зонăна контроллесе тытса тăрас ĕçе хăйсен аллине илеççĕ, тенĕ.

ВЕНА, сентябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн пĕрремĕшĕнче Англин тата Францин çар влаçĕсем Вена хулинче хăйсене уйăрса панă зонăна тытса тăрас ĕçе хăйсен аллине илнĕ.

Çапла вара, сентябрĕн пĕрремĕшĕнчен пуçласа Вена хулинчи чи аслă власть тăватă держава аллинче—Совет Союзĕ, Англи, Америка тата Франци аллинче пулать, вĕсем кашни хăйсем оккупацилленĕ зонăра çав чи аслă власть ĕçĕсене пурнăçа кĕртсе тăраççĕ. Вĕсем тăваттăшĕ пĕрле хулана апат-çимĕç тăратассишĕн тăрăшмалла.

КĔСКЕН

Венгри хаçачĕсем çапла пĕлтереççĕ: Венгрипе Румыни пĕр-пĕринпе суту-илÿ тăвасси çинчен килĕшÿ тунă. Венгри Румынирен кĕленче, йывăç, сĕрмелли çусем илсе тăмалла, ун вырăнне вăл Румынине медикаментсем, йĕтĕн, аллюмини тата ытти таварсем парса тăмалла.

Ответлă редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти Водопьянов ячĕпе тăракан тир-сăран комбинатне çакăн пек работниксем кирлĕ: отделсен бухгалтерĕсем, плановик-экономист, ĕç тĕлĕшпе ĕçлекен экономист, атăçăсем, пулăшакан рабочисем тата ученниксем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ворошилова, 7, Кожкомбинат, отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ял хуçалăх пайĕн—3-93, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 02400 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6. 59 42 п. л.